(cc) BY



***Вастерова Вера Николаевна***

учитель

МБОУ «Среднетатмышская ОСШ»

д. Средние Татмыши, Чувашская Республика

# ДИАЛЕКТНЫЕ ОСОБЕННОСТИ РЕЧИ ЖИТЕЛЕЙ ДЕРЕВНИ

***Аннотация****: в статье представлены особенности диалектной системы деревни Елмачи Канашского района Чувашской Республики. Проанализированы типы диалектизмов, выявлена и обоснована необходимость сбора и изучения диалектных слов.*

***Ключевые слова****: деревня Елмачи, рынок в селе Ачакасы, диалект, фонетические диалектизмы, грамматические диалектизмы, лексические диалектизмы, семантические диалектизмы.*

***Аннотаци****: статьяра Чăваш Республикин Канаш районне кĕрекен Йăлмачча калаçăвĕн диалектизм уйрăмлăхĕсене пăхса тухнă. Диалектизмсен тĕсĕсене çырса панă, вĕсен чĕлхе пĕлĕвĕнчи вырăнне кăтартнă.*

***Тĕп сăмахсем****: диалект, Йăлмачча, Ачча пасарĕ, фонетика диалектизмĕсем, грамматика диалектизмĕсем, лексика диалектизмĕсем, семантика диалектизмĕсем.*

Чĕлхе çынсен хутшăнăвне йĕркелекен чи вăйлă хатĕр шутланать. Чĕлхери сăмахсен ытларахăш пайне çав чĕлхепе калаçакансем пурте ăнланаççĕ, вĕсемпе кулленхи пурнăçра усă кураççĕ. Çапла вара тăван чĕлхе çав халăхшăн пĕрлĕхлĕ чĕлхе пулса тăрать. Апла пулин те чăвашсен калаçăвĕнче нимĕнле уйрăмлăхсем те çук теме пултараймастпăр. Сăмахран, Вăрнар – Йĕпреç чиккинче вырнаçнă Йăлмачча калаçăвне илер. Çак тăрăхра чылай сăмахсен пĕрремĕш сыпăкĕнче литература чĕлхинчи *у* вырăнне *о* калаççĕ: *орам* (урам), *вотă* (вутă)... Йăлмачча ялĕ Кĕçĕн Çавал шывĕнчен 5–6 çухрамра икĕ чукун çул хушшине вырнаçнă. Пĕр чукун çулĕ Канашран Улатăралла каять. Ăна «кивĕ чукун çул» теççĕ. Тепри – «çĕнĕ чукун çул» – Арзамасран Çĕмĕрле, Вăрнар урлă Канаша тухать. Авал кунта сĕм вăрмансем кашланă. Чăвашсен аслашшĕсем сĕм вăрмансене ка-



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

са-каса, тыр-пул акса тума ҫӗр хатӗрленӗ, пӗр-пӗринпе ялан хутшӑнса ӗҫлеме майсем пулман, юнашар ялсем кӑна хутшӑннӑ, пысӑк тавралӑхри ялсене пӗр-пӗринпе ҫывӑх хутшӑнма ҫырма-ҫатрасем, юхан шывсем чӑрмантарнӑ. Йӑлмаччаран 5–6 ҫухрӑмри Ачча пасарӗ таврари чӑваш ялӗсене илӗртекен пысӑк суту-илӳ центрӗ шутланнӑ. Чӗмпӗр кӗпернине кӗрекен Кӑрмӑш уесӗнчи чӑвашсем те кунталла туртӑннӑ. Ҫак хутшӑну чӗлхе уйрӑмлӑхӗсене тата пӗр евӗрлӗхӗсене тӑвакан ҫӑл куҫсенчен пӗри пулнӑ. Ҫавна пула чӗлхере вак уйрӑмлӑхсем пулса кайнӑ, вӗсем Хусан кӗпернин Етӗрне уесӗнчи чӑвашсен чӗлхипе пӗрешкел.

Пурнӑҫ аталанса пынӑ май Йӑлмаччара вырӑнти калаҫу уйрӑмлахӗсем ҫухалсах, иксӗлсех пыраҫҫӗ. Ҫав-ҫавах фонетикӑри, грамматикӑри, лексикӑри уйрӑмлӑхсем ялти ватӑ ҫынсен чӗлхинче нумай тӗл пулаҫҫӗ. Диалект лексики пӗрешкел мар, ӑна тӗрлӗ ушкӑна уйӑрма май пур, вӗсем ҫаксем:

1) фонетика диалектизмӗсем;

2) грамматика диалектизмӗсем;

3) лексика диалектизмӗсем;

4) семантика диалектизмӗсем.

Фонетика диалектизмӗсем вӗсем – литература чӗлхинчи сӑмахсемех, анчах сасӑ тӗлӗшӗнчен кӑшт та пулин уйрӑлса тараҫҫӗ. Йӑлмачча ял калаҫӑвӗнче те литература чӗлхинче йышӑннӑ сӑмахсенчен уйрӑлса тӑраканнисем чылай, вӗсенчен пӗрисем сасӑ тытӑмӗ тӗлӗшӗнчен урӑхларах, теприсем пачах расна сӑмахсем. Тӗслӗхрен: *сахат* (сехет), *орам* (урам), *саххӑр* (сахӑр). Вӗсем литература чӗлхинчи сӑмахсенчен уҫӑ е хупӑ сасӑпа уйрӑлса тӑни куҫ кӗрет.

Ял калаҫӑвӗнчи *фонетика диалектизмӗсен* уйрӑмлӑхӗсене пӑхса тухар.

1. Тури диалектри пек пуҫламӑш сыпӑксенче [о] сасӑ тӗл пулать:

| *вырӑнти калаҫура* | *литература чӗлхинче* |
|---|---|
| орам | урам |
| отрӑм | утрӑм |
| омма | ҫӗр улми |
| вотӑ | вутӑ |
| сорӑх | сурӑх |
| сохал | сухал |

2. Тури диалектри пек тутапа калакан [ӑ$^{o}$] сасӑ пур:


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

| *вырăнти калаçура* | *литература чĕлхинче* |
|---|---|
| пă$^{о}$р | пăр |
| çă$^{о}$м | çăм |
| пă$^{о}$с | пăс |

3. Сасăсем тухса ӳкни. Уçă сасăсем тухса ӳкни икĕ тымар пĕр хутлă пĕрлĕхе пĕрлешнĕ чухне пулса иртет:

| *вырăнти калаçура* | *литература чĕлхинче* |
|---|---|
| кайсил | кайса ил |
| çырсил | çырса ил |
| туртсил | туртса ил |
| çанта | çакăнта |
| каяспать | каяс пулать |
| вуласпать | вулас пулать |
| панче | патĕнче |
| панчи | патĕнчи |
| кайсяр | кайса яр |
| пыратри | пыратăр-и |
| пĕлетри | пĕлетĕр-и |
| пĕлместри | пĕлместĕр-и |

4. Сăмах сыпăкĕсене ылмаштарса лартаççĕ:

| *вырăнти калаçура* | *литература чĕлхинче* |
|---|---|
| шулăç | çулçă |
| çулăç | çулçă |
| курĕш | куршĕ |

5. Сăмах вĕçĕнче [ă], [ĕ] сасăсем кĕрсе лараççĕ:

| *вырăнти калаçура* | *литература чĕлхинче* |
|---|---|
| газă | газ |
| кайманă | кайман |
| вуламанă | вуламан |
| çырманă | çырман |
| пĕлменĕ | пĕлмен |
| илменĕ | илмен |

6. Янăрамасăр илтĕнекен [т], [п], [к], [х] сасăсем вăрăммăн илтĕнеççĕ:

| *вырăнти калаçура* | *литература чĕлхинче* |
|---|---|
| тоттăр | тутăр |
| шăппăр | шăпăр |


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

| | |
|---|---|
| кăккăр | кăкăр |
| саххăр | сахăр |

7. Хупă сасăсем сăмах варринче тухса ӳкеççĕ:

А) [л] сасă:

| *вырăнти калаçура* | *литература чĕлхинче* |
|---|---|
| сухăм | сулхăн |
| ашли | ал шăлли |
| вĕтрен | вĕлтрен |
| путран | пултран |
| утала | ултала |

Ă) [в] сасă:

| *вырăнти калаçура* | *литература чĕлхинче* |
|---|---|
| часа | чавса |
| алтан | автан |
| алан | авлан |
| аса | авса |
| талаш | тавлаш |

Б) [й] сасă:

| *вырăнти калаçура* | *литература чĕлхинче* |
|---|---|
| хыра | хăйра |
| мара | майра |
| уран | уйран |
| карăмăр | кайрăмăр |

В) [т] сасă:

| *вырăнти калаçура* | *литература чĕлхинче* |
|---|---|
| сенре | сентре |
| канра | кантра |
| апра | аптăра |

8. Хупă сасă сăмах варринче кĕрсе ларать:

| *вырăнти калаçура* | *литература чĕлхинче* |
|---|---|
| ыта*к*ла | ытала |
| йăва*к*ла | йăвала |
| ата*к*лан | аталан |

*Грамматика диалектизмĕсем*.

Кĕçĕн Çавал тăрăхĕнчи Йăлмачча калаçăвĕнче грамматика категорийĕсем литература чĕлхинчисемех, пĕр категори форми пачах расна тытăмлă аффикс-семпе йĕркеленни тĕл пулмасть. Уçă сасăпа пĕтекен сăмах çумне уçă сасăпа


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

пуçланакан аффикс хушăннă морфемăсем чиккинче тĕрлĕ улшăнусем пулса иртеççĕ.

Морфологири уйрăмлăхсем:

1. -*сем* аффиксăн хытă вариантĕ сингармонизм саккунĕн витĕмĕпе сыхланса юлнă. Хытă уçă сасăллă сăмахсем çумне аффиксăн хытă вариантĕ – -*сам* хушăнать: *ачсам* (ачасем), *шулăçсам* (çулçăсем), *пулăсам* (пулăсем). Çемçе уçă сасăллă сăмахсем çумне аффиксăн çемçе вариантĕ -*сем* хушăнать: *кĕнекесем, тилĕсем*.

2. [у], [ӳ] сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсен пару падежĕнче сăмах вĕçĕнче *у,ӳ* çаплипех юлать:

| *вырăнти калаçура* | *литература чĕлхинче* |
|---|---|
| пăр*у*н | пăрăвăн |
| çыр*у*н | çырăвăн |
| чирк*ӳ*не | чиркĕве |
| пĕл*ӳ*не | пĕлĕве |
| кĕт*ӳ*не | кĕтĕве |
| кас*у*на | касăва |

3. Уçă сасăпа пĕтекен япала ячĕсем çумне камăнлăхпа пару падежĕсен аффиксĕсем хушăннă чух *й*, *в* кĕрсе ларать:

| *вырăнти калаçура* | *литература чĕлхинче* |
|---|---|
| лаша*й*ăн | лашан |
| пăру*й*ăн | пăрăвăн |
| пăру*в*а | пăрăва |
| кĕрӳ*н*е | кĕрĕве |

4. Япала ячĕн нумайлă хисепĕнчи пару падежĕнче аффикс тытăмĕ [н] сасă тухса ӳкнĕ пирки кĕскелет, сăмах вĕçĕ вăрăмрах илтĕнет:

| *вырăнти калаçура* | *литература чĕлхинче* |
|---|---|
| ачасе | ачасене |
| атьсе | атьсене |
| юлташсе | юлташсене |

5. Ĕçе тума пултарнипе путарайманнине кăтартакан глагол формин (пулаю формин) глагол тĕпĕ çумне -*и* аффикс хушăннипе пулать, 1-мĕш сăпатра вăхăт, сăпат афффиксĕсем тухса ӳкеççĕ:


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

| *вырӑнти калаҫура* | *литература чӗлхинче* |
|---|---|
| вул*и*мас | вулаймастӑп |
| кай*и*мас | каяймастӑп |
| ӗҫл*и*марӑм | ӗҫлейместӗп |
| кал*и*марӑм | калаймастӑп |
| ҫитиятн*и* | ҫитеетӗн-и |

6. Хальхи вӑхӑтри глаголсен 2-мӗш сӑпачӗ вӑррӑммӑн -*атт-ӑр (-ет-ӗр),* -*тт-ӑр (-тт-ӗр)* илтӗнет:

| *вырӑнти калаҫура* | *литература чӗлхинче* |
|---|---|
| пӗле*тт*ӗр | пӗлетӗр |
| итле*тт*ӗр | итлетӗр |
| сисе*тт*ӗр | сисетӗр |
| вула*тт*ӑр | вулатӑр |
| кая*тт*ӑр | каятӑр |
| ташла*тт*ӑр | ташлатӑр |

7. 3-мӗш сӑпатри хальхи вӑхӑтри глагол форми 2 вариантлӑ:

| *вырӑнти калаҫура* | | *литература чӗлхинче* |
|---|---|---|
| 1 вариант | 2 вариант | |
| каять | кая*тӗ* | каять |
| килет | киле*тӗ* | килет |
| ҫырмасть | ҫырма*ҫ* | ҫырмасть |

Глаголӑн 3-мӗш сӑпат форминче сӑпат аффиксӗ -*ӗ* сыхланса юлнӑ. Вӑрман урамӗнче пурӑнакансем ҫак формӑпа час-часах усӑ кураҫҫӗ.

8. [ҫ], [п] сасӑсемпе пӗтекен глаголсен пӗрре иртнӗ вӑхӑт форминче ҫав хупӑ сасӑсем вӑрӑмланаҫҫӗ:

| *вырӑнти калаҫура* | *литература чӗлхинче* |
|---|---|
| пи*ҫҫ*ӗр | пиҫрӗ |
| ху*ҫҫ*ӗр | хуҫрӗ |
| ҫа*пп*ӗр | ҫапрӗ |
| та*пп*ӗр | тапрӗ |

9. Глаголӑн темиҫе иртнӗ вӑхӑт формипе сайра усӑ кураҫҫӗ, ун вырӑнне хальхи вӑхӑт форми ҫумне -*чӗ* аффикс хушса калаҫҫӗ:

| *вырӑнти калаҫура* | *литература чӗлхинче* |
|---|---|
| ҫырапчӗ | ҫыратӑпччӗ |
| ҫыранччӗ | ҫыратӑнччӗ |
| ҫыраччӗ | ҫыратчӗ |


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

10. Хушу наклоненийĕнчи 3-мĕш сăпатри глаголсене сăмах çемçе е хытă пулнине пăхмасăрах -*ччĕр* аффикс хушса калаççĕ:

| *вырăнти калаçура* | *литература чĕлхинче* |
|---|---|
| кай*ччĕр* | кайччăр |
| кур*ччĕр* | курччăр |
| вула*ччĕр* | вулаччăр |

11. Нумай вăхăта тăсăлакан, ялан пулса иртекен ĕçсене кăтартма вырăс чĕлхинчи *без* сăмахпа усă кураççĕ:

| *вырăнти калаçура* | *литература чĕлхинче* |
|---|---|
| *без* калаçать | чарăнмасăр калаçать |
| *без* кăшкăрать | пĕрмай кăшкăрать |
| *без* кулать | ялан кулать |
| *без* чупать | кашни кунах, яланах чупать |
| *без* çыврать | пĕрмай çыврать |
| *без* тулашать | ялан тулашать |

Синтаксис диалектизмĕсем:

1. Глаголсем хăйсем умĕнче тăракан ят сăмахсемпе тĕрлĕ майпа çыхăнса тăнине асăрхама пулать. Япала ячĕпе глагол чылай чухне хыç сăмахпа е пулăшу ячĕпе çыхăнать:

*Ку ĕçе тума сан çине шанатăп.*

*Пиччĕшсене кайса килчĕ.*

*Уммана уйăх хушшинче темиçе хут çумларăмăр.*

*Кашта çинче пăяв çакăнса тăрать.*

2. -*са(-се)* аффикслă деепричасти хутсăр предложенин сказуемăйĕ пулать:

*Эп ку кĕнекене вуласа.*

*Хулана эп ĕнер кайса.*

*Сахат çине вăхăтра пăхса.*

*Лексика диалектизмĕсем*.

Йăлмачча калаçăвĕнче чăваш литература чĕлхине кĕмен лексика диалектизмĕ чылай. Тĕслĕхрен, вырăнти калаçура тĕл пулакан *шуç* (хĕç тимĕр*), шитти* (карта*), шăтăкла* (чĕнтĕр) литература чĕлхине кĕмен.

| *вырăнти калаçура* | *литература чĕлхинче* |
|---|---|
| папак | ача |



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

| | |
|---|---|
| шитти | карта |
| тукканис | улма нимĕрĕ |
| паранк, умма, паранкă, картошка, картах | ҫĕр улми |
| палми, палумми, яблок | пан улми |
| пăртманек | енчĕк |
| маттик | катмак |
| ханша | эрех |
| чĕкĕнтĕр | кăшман |
| пăяв | вĕрен |
| ҫытар | минтер |
| хуш | хушă, урам |
| утлантарса ҫирĕм | сĕрсе ҫирĕм |
| сала кайăк | ҫерҫи |
| асаккай | асатте |
| апа | асанне |
| имлерĕ | сиплерĕ |
| шăтăкла | чĕнтĕр |
| матка | арăм |
| макаҫҫиннă | лавкка |
| тăрпа | мăрье |
| чĕпĕн | ӳпре |
| шалча пăрҫи | фасоль |
| пыскатте | хресна атте |
| пысканне | хресна анне |
| кăҫатă | ҫăматă |
| хусăк, калек | йывăҫ кĕреҫе |
| Гена пиччу | Гена пичче |
| Гена мучу | Гена мучи |
| касуҫ | кĕтӳҫ |
| кăмака тăррине хăпар | кăмака ҫине хăпар |
| кăмака тăррине улăх | кăмака ҫине хăпар |
| креплĕ | кĕрепле |
| йăран хушшине ҫыр | йăран хушшине кăпкалат |
| сахат | сехет |
| ҫерккăл | тĕкĕр, куҫ кĕски |
| кулюкка | кăвакарчăн |
| ĕслĕк | ӳслĕк |
| шуҫ | хĕҫ тимĕр |
| утта пăтрат | утта хускат, типĕт |
| кĕт | кăшт, пăртак |

Лексика диалектизмĕсем пайăр ятсенче те сыхланса юлнă*: Паранкă ҫырми, Шупăлч ҫырми.*


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Паранкă çырми

Йăлмачча ялĕн чиккинче икĕ Паранкă çырми сыхланса юлнă. 1876 çулта çуралнă Тихон Афанасьев каланă тăрăх, ĕлĕк кашни çыннăн хăйĕн уйрăм ятак çĕр пулнă, икĕ çырма хушшине çĕр улми (паранкă) нумай лартса ӳстернĕ, тухăçĕ те начар пулман.

Шупăлч çырми

Шупăлч çырми чи паллă çырмасенчен пĕри. Вăл Йăлмаччапа Татмăш ялĕсе уйĕсене пĕр-пĕринчен уйăрса тăрать. Шупăлч тени «Шыв пуçĕ» тенине пĕлтерет. Тури диалектра *су – «шыв»*.

*Семантика диалектизмĕсем.*

| *вырăнти калаçура* | *литература чĕлхинче* |
|---|---|
| кусса çӳрерĕм -<br>якăлтатса, ахăрса çӳрерĕм | кусса çӳрерĕм -<br>каялла-маялла уссăр çӳрерĕм, вăхăта сая ятăм |
| хавшак – лара-тăра пĕлмен çын | хавшак – вăйсăр çын |

*Халăх сăмахлăхĕнчи вырăнти калаçу уйрăмлăхĕсем.*

*Туй йăли-йĕркинчи вырăнти калаçу уйрăмлăхĕсем.*

Вырăнта сарăлнă халăх самахлăхĕн тĕслĕхĕсенче лексика, фонетика, морфологи диалектизмĕсем тĕл пулаççĕ.

А) Туй юррисенче:

Тупата, Туршăн, *туй матки,*
Тупата, Туршăн, *туй матки,*
Ĕнемесен тытса пăх.
Ĕнемесен тытса пăх.
Тупата, Туршăн, *туй матки,*
Тупата, Туршăн, *туй матки,*
Сала вырăс майри мар,
Сала вырăс майри мар,
*Туй маткине* Тур хушнă,
*Туй маткине* Тур хушнă,
Пире шăллăм хăй хушнă.


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Лексика диалектизмĕ: *туй матки* (туй арăмĕ).

Пирĕн кĕрӳ ачашскер,

Пирĕн кĕрӳ ачашскер,

Ковер çинче ӳснĕскер.

Ковер сарса памасан

Машин çинчен *ан тохсам.*

Фонетика диалектизмĕ: *ан тохсам* (ан тухсам).

Аллă *çохрăм* килтĕмĕр,

Аллă *çохрăм* килтĕмĕр,

Ал процентлă хĕр илме,

Ал процентлă хĕр илме,

«*Алли-ори* мĕнле-ши?» -

Тесе ыйтаç тăвансем.

Фонетика диалектизмĕсем: *çохрăм* (çухрăм), *алли-ори* (алли-ури); грамматика диалектизмĕ: *ыйтаç* (ыйтаççĕ).

Китайăский палмийĕ

Килес çулччен ларсан та

Унран пысăк *полас* çук.

Çакă ялăн хĕрĕсем

Килес çулччен пурнсан та

Унран хитре *полас* çук.

Фонетика диалектизмĕсем: *полас* (пулас), *çохрăм* (çухрăм); грамматика диалектизмĕ: *палми* (пан улми).

*Монча-вите хошшинче*,

*Монча-вите хошшинче*,

*Хăçон корăк* шăтни *пор*?

*Хăçон корăк* шăтни *пор*?

*Йотă* киле кайсассăн,

*Йотă* киле кайсассăн

Хăçон ырă корни пор,


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Хăçон ырă корни пор.

Фонетика диалектизмĕсем: *монча-вите* (мунча-вите), *хошшинче* (хушшинче), *хăçон* (хăçан), *йотă* (ют).

Ă) Туй такмакĕсенче:

Ăннарат-ăннарат,

Сысна умма пуçтарать,

Вĕтти-шултри *тиркемеç*,

Йĕм пĕççине тултарать.

Грамматика диалектизмĕ: *тиркемеç* (тиркемест).

*Навус* купи ма сикет?

Ăна *сенĕк* сиктерет.

Эпир кунта ма сикетпĕр?

«Московский» сиктерет.

Навус çинчи кăмписем

Навус пула пуçланă.

Çакă ялăн каччисем

Мучи пула пуçланă.

Лексика диалектизмĕсем: *навус* (тислĕк), *сенĕк* (сенкĕ).

Анчах тухнă чăх чĕппи

Вилет симĕс курăкшăн.

Çакă ялăн хĕрĕсем

*Вилеç* качча каясшăн.

Грамматика диалектизмĕ: *вилеç* (вилеççĕ).

Хĕрлĕ, хĕрлĕ çырлийĕ

*Çулăç* витĕр курăнать.

Ах, мăнтарăн аншарлийĕ,

Тĕлĕкре те курăнать.

Фонетика диалектизмĕ: *çулăç* (çулçă).

Шыв хĕрринчи *сапарпи*

Шыв тиркесе ватăлнă.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Çакă ялăн каччисем

Хĕр тиркесе ватăлнă.

Лексика диалектизмĕ: *сапарпи* (армути).

(Халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене Йăлмачча ялĕнче çуралса ӳснĕ Артемьева Людмила Михайловнăран 2018 çулта çырса илнĕ.)

*Ача-пăча сăмахлăхĕнчи вырăнти калаçу уйрăмлăхĕсем.*

А) Витлешӳсенче:

Варвари-тарари,

*Шор* упине тытар-и?

*Шор* упине пулмасан

Кĕрĕк арки тытар-и?

Ваççа – каççа,

Кĕпер урлă *каççа,*

Çуллă пăтă *çыса,*

Кашăк avри *хуççа.*

Фонетика диалектизмĕсем: *шор* (шур, шурă), *каççа* (каçса), *çыса* (çисе), *хуççа* (хуçса).

Ă) Шут сăввисенче:

Манăн пĕчĕк пӳлĕмре

*Такăшĕ* тустарнă.

Пĕрре, иккĕ, виççĕ,

Чăн та эс тустарнă.

Сысна *умма* кăларать,

Пĕр *уммине* пытарать.

Кам тупать – çав тухать.

Фонетика диалектизмĕсем: *такăшĕ* (тахăшĕ), *умма* (улма).

Ача-пăча сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене Йăлмачча ялĕнче çуралса ӳснĕ 11 çулти Павлов Роман Анатольевичран 2018 çулта çырса илнĕ.

Пурнăç улшăнса пынă май çамрăк ăру вырăнти калаçу сăмахĕсемпе сайра усă курать. Хальхи саманара вĕсем ытларах литература чĕлхин нормисене


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

пăхăнса калаçаççĕ. Йăлмаччари Вăрман, Сад урамĕсенче паян кун та тури диалект паллисем çухалман. Ялти ватăсем, ытларах хĕрарăмсем, вырăнти калаçу сăмахĕсемпе пуплевре нумай усă кураççĕ-ха, вĕсен чĕлхинче вырăнти уйрăмлăхсем вăйлă палăраççĕ. Йăлмачча ялĕн туй юррисенче те вырăнти сăмахсем хăйсен пĕлтерĕшне çухатмаççĕ.

Диалект сăмахĕсем чĕлхе пуянлăхĕ шутланаççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ пирĕн тăван чĕлхен авалхи сăн-сăпатне кăтартса пама пулăшаççĕ, çавăнпа та ун пек сăмахсене пухасси пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç шутланать.

Вырăнти калаçу уйрăмлăхĕсене лайăх пĕлни писательсемпе поэтсене тата литература тĕпчевçисене те кирлĕ. Диалект сăмахĕсем литература чĕлхин картишĕнче тăмаççĕ, апла пулин те вĕсене литература произведенийĕсенче курма пулать. Диалект сăмахĕсемпе вырăнлă та витĕмлĕ ăсталаса кĕртнине эпир Х. Уяр, Н. Мранькка, Илпек Микулайĕ, Я. Ухсай произведенийĕсенче те куратпăр.

Диалект йăнăшĕсенчен хăтăласси, литература нормисене çирĕплетсе пырасси кашни шкул ачин тивĕçĕ пулмалла тесе шутлатăп. Пуçламăш классенче вĕренекенсем малтанлăха литература чĕлхин нормине пĕлмен пирки вырăнти калаçупа усă кураççĕ. Вĕрентекенĕн вырăнти калаçу уйрăмлăхĕсене лайăх пĕлмелле çеç мар, çав уйрăмлăхсенчен хăтăлмалли майсемпе мелсене, меслетсене лайăх чухласа, вĕсемпе тухăçлă та вырăнлă усă курса ĕçлемелле. Чи малтан вĕрентекенĕн хăйĕн литература чĕлхине лайăх пĕлмелле, ăçта ĕçленине кура ял калаçăвне те шута илмелле. Ун пуплевĕ кашни ачашăн паха тĕслĕх пулмалла. Çаксене асра тытмасан ачасене литература нормисене пăхăнса калаçма-çырма вĕрентмешкĕн йывăр.

***Список литературы***

1. Егоров В.Г. Диалекты чувашского языка и их особенности // Современный чувашский литературный язык. – Чебоксары, 1971. – С. 55–64.

2. Сергеев Л.П. Диалектологический словарь чувашского языка. – Чебоксары, 1968. – С. 3–104.

3. Сергеев Л.П. Чăваш диалектологийĕ: Вĕренӳ пособийĕ. — Шупашкар, 2003. – С. 13–47.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

4. Сергеев Л.П. Чăваш чĕлхин вырăнти калаçăвĕсем. – Шупашкар: Руссика, 1969. – С. 3–78.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)